# ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН САККУНĔ

## ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ ГРАЖДАНЛА ОБОРОНА ÇИНЧЕН" САККУНĔН 8 СТАТЙИНЕ УЛШĂНУСЕМ КĔРТЕССИ ÇИНЧЕН

*Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ*
*2023 çулхи ака уйăхĕн 20-мĕшĕнче*
*йышăннă*

**1 статья**

Чăваш Республикин "Чăваш Республикинчи гражданла оборона çинчен" 2020 çулхи раштав уйăхĕн 15-мĕшĕнчи 111 №-лĕ саккунне ("Республика" хаçат, 2020, 50 №) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) ятне çакăн пек çырса хурас:

"8 статья. **Чăваш Республикин гражданла оборона енĕпе полномочи панă ĕç тăвакан органĕн полномочийĕсем**";

2) пĕрремĕш абзацра "Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн гражданла оборона енĕпе полномочи панă органĕн" сăмахсене "Чăваш Республикин гражданла оборона енĕпе полномочи панă ĕç тăвакан органĕн" сăмахсемпе улăштарас;

3) виççĕмĕш абзаца çакăн пек çырса хурас:

"гражданла оборона управленийĕн техника тытăмĕсене, халăха пĕлтермелли тытăмсене, хӳтĕлев сооруженийĕсене тата гражданла оборонăн ытти объекчĕсене тăвасси, юсаса çĕнетесси тата вĕсене яланах ĕçе хатĕр шайра тытса тăрасси;";

4) тăваттăмĕш абзаца çакăн пек çырса хурас:

"халăха вăхăтра пĕлтерес ĕçе тивĕçтересси тата пурнăçласси;".

**2 статья**

1. Çак Саккун, çак статьяпа урăх вăхăтра вăя кĕртме палăртнă положенисемсĕр пуçне, ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕрет.

2. Çак Саккунăн 1 статйин 3-мĕш, 4-мĕш пункчĕсем 2023 çулхи çу уйăхĕн 4-мĕшĕнчен пуçласа вăя кĕреççĕ.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ – О. Николаев

Шупашкар хули
2023 çулхи ака уйăхĕн 22-мĕшĕ
26 №